***Задания** для муниципального этапа республиканской олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2021/2022 учебный год. 7 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та ĕçсене тăвăр.

*(1)Ылтăн кĕркунне çитрĕ. (2)Уй-хир пушанчĕ. (3)Янкăр тӳпере ... шăваççĕ. (4)Кăнтăрла хĕвел ялтăртатать, анчах та ун ăшши çуллахи пек мар. (5)Ирсерен час-часах тăм ӳкет. (6)Мĕнле илемлĕ кĕркуннехи вăрманта! (7)Йывăççем хушшинче сарă, хĕрлĕ тум тăхăннисем курăнаççĕ. (8)Ав унта сап-сарă вĕренеларать, ăвăс та хĕрелнĕ, шĕшкĕ те хăмăрланнă. (9)Паланпа улмуççи çулçисем те саралма пуçланă. (10)Сарăхнă, хĕрелнĕ, кĕренленнĕ çулçăсем тӳлек çанталăкра туратсем çинчен вĕлтĕртетсе вĕçсе анаççĕ. (11)Вăрман кĕрхи çилпе кашлама тытăнсан çулçăсем темрен хăранă кайăксем пек пăлханаççĕ, вăрмантан вĕçсе тухаççĕ те хир тăрăх сапаланаççĕ. (12)Вăрман майĕпен çаралать. (13)Вĕçен кайăксем те таçта кайса кĕчĕç…* (М. Трубина)

1. Текстран йывăç ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
2. Тĕс ячĕсенчен пулнă сăмахсене пуçламăш формăна лартса çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
3. 3-мĕш предложенире нумай пăнчă вырăнне мĕнле сăмах çырмалла? Сăмаха çырăр та вырăсла куçарăр.
4. Текстра танлаштару тупăр.
5. Текстран мăшăр сăмах(сем) çырса илĕр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Кĕр мăнтăр, ... .*
*Кĕр пуйтарать, ... .*
*Кĕркунне какай, ....*
*Кĕркунне çерçи те ... .*
*Кĕрпе кĕрĕк тăхăн, ... .*

7. Мĕн вăл рифма?
8. Тупсăмне пĕлĕр.

*Таçти çĕре те çитеретĕп,*
*Тимлĕрех итлесе лар.*
*Вăрманта эпĕ ӳсетĕп,*
*Сас палли çеç улăштар.*

9. К. Ивановăн „Нарспи“ поэминчи сăнарсен ячĕсене 5-рен кая мар çырăр.

10. „Юрă – халăх чунĕ“ ваттисен сăмахне уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар эссе çырăр.

***Задания** для муниципального этапа республиканской олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2021/2022 учебный год. 8 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та ĕçсене тăвăр.

*Çулталăкпа Çĕр питĕ туслă пурăннă. Вĕсем вун иккĕ ача ӳстернĕ: ултă хĕрпе ултă ывăл. Хĕрĕсем пĕринчен тепри чипер те ĕçчен. Ывăлĕсем маттур та хăюллă. Чи аслисем — Январьпе Февраль. Аслă хĕрне ашшĕпе амăшĕ Март тесе чĕннĕ. Унтан Апрель, Май, Июнь, Июль, Август хĕрĕсем çуралнă. Вĕсем хыççăн каллех ывăлсем — Сентябрь, Октябрь, Ноябрь, Декабрь. Тăвансем пурте питĕ туслă пурăннă.*

*— Çу иртет, — тенĕ пĕр ирхине кĕçĕн хĕрĕ Август, — атьăр ман пата хăнана.*

*Пурте килĕшнĕ. Тепĕр кунне вĕсем Август патĕнче хăнара пухăннă. Кăмăллăн кĕтсе илнĕ Август пиччĕшĕсемпе шăллĕсене, аппăшĕсене. Сĕтел çине çĕнĕ тырăран пĕçернĕ çăкăр, çĕнĕ çĕр улми, улма-çырла, сĕт-çу, аш яшки лартнă. Пурте Августа çăкăр-тăварпа кĕтсе илнишĕн, тутлă апат-çимĕçшĕн тав тунă. Август хăй те тăванĕсене тав тума манман.*

*— Эсир ман валли хĕлле юр, çулла çумăр çутартăр, хĕвел пăхтартăр, ăшă çанталăк илсе килтĕр. Çавăнпа та тырă-пулă, улма-çырла, пахча çимĕç тухăçлă пулчĕç. Малашне те туслă пурăнар, тăвансем. Хамăр ĕçе яланах вăхăтра тăвар.*

1. Уйăх ячĕсене мĕншĕн пысăк сас паллинчен пуçласа çырнă-ши?
2. Уйăх ячĕсене чăвашла куçарса йĕркипе çырăр.
3. Текстран мăшăр сăмахсене çырса илĕр.
4. Текстра орфографи йăнăшĕ тупăр, мĕншĕн йăнăш пулнине ăнлантарăр.
5. Текстран чи вăрăм ят сăмах майлашăвĕ çырса илĕр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Кĕрхи калчана ... .*
*Кĕрхи кун кĕлтеллĕ, ....*
*Кĕркунне куракăн та ....*
*Кĕр мăнтăр, ....*
*Кĕр пуçтарать, ....*

7. Мĕн вăл мăшăр рифма?
8. Тупсăмне пĕлĕр.

*Эп çирĕп сывлăхлă пулсан*

*Пурте маншăн савăнаççĕ.*
*Пĕр сас палли улăштарсан*
*Ман çинче сухан тураççĕ.*

9. К. Ивановăн мĕнле юмахĕнче ашшĕ кĕçĕн хĕрне килтен хăваласа ярать.

10. „Юрă – халăх чунĕ“ ваттисен сăмахне уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар эссе çырăр.

***Задания** для муниципального этапа республиканской олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2021/2022 учебный год. 9 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та ĕçсене тăвăр.

*Йĕрсем – тискер-кайăксемпе вĕçен-кайăксем хăйсен пурнăçĕ çинчен çырса хăварнă кĕнекесем. Вĕсене юр çинче, хăйăр çинче, пыльчăк çинче, йывăççемпе тĕмсем çинче тупма пулать. Урасемпе, çунатсемпе, сăмсасемпе, шăлсемпе, чĕрнесемпе, хӳресемпе çырнă ку кĕнекене. Юр çинче шăши йĕр хăварнă. Сасартăк вăл çухалать. Шăтăк та çук, айккине сикни те курăнмасть. Шăши çара çерçи пулса вĕçсе кайман-и? Вĕçсе кайнă вăл тăмана çуначĕсем çинче! Хурăн айĕнче – чăрăш йĕкелĕн купи! Юнашар нимĕнле чăрăш та çук. Мĕнле килсе выртнă-ха йĕкелсем кунта? Вĕсене ула такка йăта-йăта килнĕ иккен. Хурăн вулли çумне шакка-шакка çĕмĕрнĕ. Вăрман ачисем уçланкăра тăпраран çăкăр пĕçернĕ! Анчах та çăкăр мар, каюра чавса çĕкленĕ тăпра куписем вĕсем. Каюрасем шăтăк чавнă та тăприне çиеле кăлара-кăлара пăрахнă.* (Н. Сладков.)

1. Текстран чĕр чун ячĕсене çырса илĕр, вырăсла куçарăр.
2. Текстра йăнăш çырнă сăмахсене тупса тĕрĕс çырăр, мĕншĕн апла çырмаллине ăнлантарăр.
3. Текстра пĕр йышши членсен чи вăрăм ярăмне тупса çырса илĕр. Пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартас уйрăмлăха ăнлантарăр.
4. *Вăрман ачисем* илемлĕх мелĕн хăш тĕсĕ пулать?
5. Текстра ыйтуллă предложенисем тупăр, ыйтăва палăртмалли мелсене кăтартăр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Вăрман пек пуянни çук, ... .*
*Вăрмана вутă турттармаççĕ, ... .*
*Йывăççине кура ... .*
*Улми йывăççинчен ... .*
*Çамрăк хулă авăнать, ... .*

7. Мĕн вăл прототип?
8. Тупсăмне пĕлĕр.

*Пырса çапап эп кассăн-кассăн*

*Карапсене тинĕссенче.*
*Пĕр сас палли улаштарсассăн*
*Мана куран кашнин çинче.*
9. *Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт,*
*Мĕншĕн эсĕ нăрлатăн?*
*Сарă чечек тăрринче*
*Çавăрăнса çӳретĕн?*
Çак йĕркесене кам çырнă? Сăввăн ячĕ мĕнле?

10. „Юрă – халăх чунĕ“ ваттисен сăмахне уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар эссе çырăр.